27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
18
ВЫРСАРНИКУН
120(6615) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 16-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнӗн 16-мӗшӗнче Карели перешеекӗнче пирӗн ҫарсем наступлени вăйлатса пынă, тăшманпа ҫапăҫса, халăх пурăнак ан 100 пункта ытла туртса илнӗ, вăл шутра — ЮККОЛА, ИОРОЛА, МАСТЕРЯРВИ, ПИЙСПАЛА, ПУТРОВА, ЛЕЙСЛИЛЯ, УСИКИРККО, ХАРЬЮ, ЛОУНАТЙОКИ, ХЕТСЕЛЯ, ЛИЙКОЛА, БОЛЬШИЕ КИРКИАМЯКИ, МАЛЫЕ КИРКИАМЯКИ, БОЛЬШОЕ КАЙБАЛОВО, АЛИСКА, КОРЛЕ, ХАТАККАЛА, ИОЕНТАУС, САРОЙНЕН, ТАППАРИ ятлă ялсем тата КАННЕЛЬЯРВИ, ЛОУНАТЙОКИ, МАСТЕРЯРВИ, ЯПИЛЯ ятлă чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтăн ытти участокӗсенче улшăнус ҫук пулман.

Июнӗн 15-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекӗнче пирӗн ҫарсем ӗнер финсен оборонин иккӗмӗш тăрăхне татнă хыҫҫăн наступлени туса пынă. Тăшман хирӗҫ тăнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, пирӗн чаҫсем халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Ҫав пунктсенчен нумайӗшӗнчен финсем оборонăн вăйлă ҫирӗплетнӗ узелӗсем туса хунă. Совет артиллерисчӗсем, наступлени туса пыракан пехотăна пулăшса тăрса, хăйсен хăватлă вут-хӗмӗпе тăшманăн оборона сооруженийӗсене ҫӗмӗреҫҫӗ. Пӗр соединени артиллерийӗ кун каҫиччен тăшманăн персе тăракан 150 точкине ытла пӗтерсе тăкнă. Совет ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан финсем ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен йывăр ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Пӗр чаҫри боецсем тăшманăн опорнăй пунктне аркатса тăкнă чухне финсен 700 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 2 танк, 40 тупă, 12 миномет, темиҫе боеприпас склачӗ тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

Совет воинӗсем тăшманпа хăйсене хăйсем хӗрхенмесӗр, геройсем пек ҫапăҫаҫҫӗ. Гварди сержанчӗ Кайжанов, финсем персе тăнине пăхмасăр, тăшман дзочӗ патне шуса кайнă. Гранатăсем вăркăнтарса, вăл ҫав дзота сирпӗнтерсе янă. Ҫав кунах Кайжанов юлташ стройран тухнă взвод командирӗ вырăнне тăнă та ҫав взвода хăй командир пулса ертсе пынă, взвода панă задачăна ăнăҫлăн пурнăҫа кӗртнӗ. Сапер-разведчик ефрейтор Никита Ефимов пӗр землянкăра 3 финн салтакне курнă, вăл вӗсене ҫавăнтах хӗҫпăшалсăрлантарнă та тыткăна илнӗ. Фирсовпа Михайлов сержантсем тата Ковальчук рядовой тăшман автомашинисен ушкăнне сасартăк тапăннă. Совետсен 3 разведчикӗ 15 финна пӗтерсе тăкнă, 2-шне тыткăна илнӗ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хӗвелтухăҫнерехре пӗр чаҫри снайперсем активлă кӗрешеҫҫӗ. Снайперсем Петр Даниловпа Сергей Тимофеев нимӗҫсем ҫӗрле укрепленисем тунă участокран инҫех мар вырткан позицие йышăннă. Нимӗҫсем ӗҫ пӗтернӗ хыҫҫăн ирхине ирех ҫӳллӗ вырăн хыҫӗнчи блиндажа пӗрерӗн кайма тытăннă. Пӗчӗк улăх урлă каҫнă чухне вӗсем совет боецӗсен вут-хӗмӗ айне пулнă. Ҫав ирхине снайперсем Даниловпа Тимофеев юлташсем 10 нимӗҫе вӗлернӗ.

Красноармеец Буланов юлташ, винтовкăпа персе, нимӗҫсен «Хеншель-126» йышши самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Пирӗн икӗ бронекатер, Смирнов лейтенант тата Волкотруб лейтенант командирсем пулса ертсе пынипе, Чудски кӳлӗ ҫинче дозорта тăнă чухне нимӗҫсен 4 катерне курнă. Совет морякӗсем тăшмана атакăланă. Смирнов лейтенантăн бронекатерӗ тăшман катерне пырса перӗнсе шыва путарнă. Нимӗҫсен тепӗр катерне самаях вăйлă сиенленӗ. Пирӗн катерсем пӗр ҫухатусăр-сиенсӗр хăйсен базисене таврăннă.

* * *

Рига заливӗнче Балтика флочӗн Торпедăсем пăрахакан самолечӗ нимӗҫсен 2.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Литовец партизанӗсен темиҫе отрячӗ икӗ эрне хушшинче нимӗҫсен ҫарсемпе хӗҫпăшал турттарса пынă 8 эшелонне ӳпӗнтерсе янă. Тата, унсăр пуҫне, нимӗҫсемпе ҫапăҫса, тăшманăн 160 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Партизансен «Дайнавос партизанас» ятлă отрячӗпе Костас Калинаускас ячӗпе тăракан отрячӗ нимӗҫсен икӗ гарнизонне аркатса тăкнă, трофейсем тытса илнӗ.

* * *

Юлашки вăхăтра тыткăна илнӗ нимӗҫ салтакӗсем фашистла нимӗҫ ҫарӗнче дисциплина ӳксе пыни ҫинчен каласа кăтартаҫҫӗ. Нимӗҫсен 206-мӗш пехотнăй дивизийӗнчи сапернăй батальонран тыткăна лекнӗ салтак Альберт Биннас ҫапла каласа панă: «30-мӗш полкри 3-мӗш батальон командирӗ Фехтнер разведчиксен ушкăнне разведкăна янă, вăл вырăссен наблюдательне тыткăна илме тата блиндажа сирпӗнтерсе яма хушнă. Разведчиксем икӗ хутчен ним тăваймасăрах каялла таврăнчӗҫ. Виҫҫӗмӗш хутӗнче вӗсем вырăссем минăсем лартса тултарнă вырăна пырса кӗнӗ. Темиҫе ҫын ҫавăнтах вилнӗ. Ыттисем малалла кайма хăранă. Батальон командирӗ ҫиленсе хăраса, разведчиксем хăйсен минисене пӗр купа туса хунă та ҫавна сирпӗнтерсе янă. Хăйсен чаҫне каялла таврăнсан, вӗсем вырăссен блиндажне сирпӗтсе ятăмăр, хирӗҫ тăнă вырăс наблюдательне вӗлертӗмӗр, тенӗ. Вара полк командирӗ ҫав разведчиксен ушкăнӗн командирне Шварц унтер-офицера тата Тал ефрейторпа Дрейер старши ефрейтора II-мӗш степень тимӗр хӗрессем парса наградӑланă. Анчах та суйса кăтартни палăрчӗ, часах вара Шварц унтер-офицера арестлерӗҫ».

23-мӗш танковăй полкран пирӗн енне каҫнă Карл Н. ҫапла каланă: «Ӗлӗкрех салтаксем разведкăна хăйсен ирӗкӗпех каятчӗҫ, халӗ ӗнтӗ ун пеккисем ҫук. Нумаях пулмасть разведкăна кайма килӗшменшӗн 4-мӗш ротăри Георг Дан тата Антон Гуммель салтаксене персе пăрахрӗҫ».

Нимӗҫсен 105-мӗш полкӗнчи 6-мӗш ротăран тыткăна лекнӗ ефрейтор Вальтер Кальц ҫапла каласа панă: «Пирӗн ротăри салтаксен икӗ ушкăнне вырăс салтакӗсене тыткăна илме приказ пачӗҫ. Мана Шафрад унтер-офицер ертсе пыракан ушкăна кӗртрӗҫ. Ҫур ҫула ҫитсен, пире вырăссем пеме пуҫларӗҫ, вара эпир нимӗнсӗрех каялла таврăнтăмăр. Рота командирӗ унтер-офицера — ҫитес ҫӗрхине пӗр-пӗр вырăс салтакне тыткăна илсе килмесен, хăраса тăнăшăн суда паратăп, тесе юнарӗ. Анчах та иккӗмӗш хут кайсан, пирӗн ӗҫ малтанхинчен те начартарах пулчӗ. Шафрад унтер-офицер мина ҫине тăрăнса вилчӗ. Венцель обер-ефрейтора вӗлерчӗҫ, темиҫе салтака амантрӗҫ, Крайз салтак пӗр хыпарсăр ҫухалчӗ. Каялла таврăнсан, рота командирӗ пире темӗн тӗрлӗ вăрҫса пӗтерчӗ, унтан вăл ҫапла каларӗ: «Вырăс салтакне тыткăна илсе киличчен эпӗ сире кашни кунах разведкăна яратăп, терӗ». Ҫакна шула вырăссем пирӗн разведчиксен ушкăнне пӗтӗмӗшпех вӗлерсе пӗтерчӗҫ, мана тата ман юлташа тыткăна илчӗҫ».

Фронтовой бригадăсен ăмăртăвӗ

КУСЛАВККА, июнӗн 16-мӗшӗ. (**Телефонпа. Хамăр корр.**). Куславкка комбиначӗнче ҫак кунсенче комсомолецсемпе ҫамрăксен бригадисен социализмлă ăмăртăвӗн май уйăхӗнчи итогӗсене пăхса тухнă.

Ҫамрăксен бригадисем май уйăхӗнче иккăҫанхинчен лайăхрах ӗҫленӗ. Комбинатри 75 бригадăран 55-шӗ производство планне ирттерсе тултарнă. Вăл бригадăсене пурне те фронтовой бригадăсен ятне панă.

Жолобов ертсе пыракан бригадăра 25 кун хушшинче 5 ҫын вырăнне 4 ҫын кăна пулнă. Вӗсем, цехран тухмасăр, пӗр браксăр ӗҫлесе, уйăхри плана 339 процент тултарнă. Ҫапла, бригада ăмăртура пӗррӗмӗш вырăн йышăннă. Ҫавăншăн ăна комбинатри куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялава панă. Жолобов юлташа бригадăна тивӗҫлипе ертсе пынăшăн пӗррӗмӗш преми — 500 тенкӗ укҫа памалла тунă. Бригада членӗсене Винокуров, Раков, Комарова, Камадин юлташсене уйăхри задание 350 процент тултарнăшăн 200-шер тенкӗ парса премиленӗ.

Ăмăртура иккӗмӗш вырăна Белобров юлташ ертсе пыракан бригада йышăннă. Вăл плана 336 процент пурнăҫланă. Бригадир Белобров хăй кашни сменăрах 4-шар норма тултарнă. Бригада членӗсем те ик-виҫшер нормăран кая тултарман.

Морков, Кармашов юлташсем ертсе пыракан фронтовой бригадăсем те ăмăртура иккӗмӗш вырăн йышăннă. Вăл бригадăсене дирекципе завкомăн тата парторганизацин Хисеплӗ грамотипе наградăланă.

И. ШАРКОВ.

Пионерсен лагерӗ уҫăлать

ВЛКСМ Октябрьски райкомӗ пионерсен Сулакки канавне лайăх йӗркелес шутпа июнӗн 25-мӗшӗпе июлӗн 15-мӗшӗ хушшинче пионерсен лагерьне организацилет. Лагерьте пӗтӗмпе 30 ача пулать.

Лагерь валли апат-ҫимӗҫсем хатӗрлес тӗлӗшпе халь райкомол колхозсемпе договорсем тунă. Колхозсем ачасем валли 4 центнер ҫăнăх, 6 центнер ҫӗрулми, 40 килограмм пăрҫа, 2.000 штук ҫăмарта, 40 килограмм какай, 40 килограмм ҫу, 6 килограмм цыл, 20 килограмм пулă параҫҫӗ. Кунсăр пуҫне райсоюс тăвар, краҫҫин, супăнь, брынза тата ытти япаласем те парса пулăшать.

Лагерь вăрманпа шыв сывăхӗнчи ялта пулать. Унта ӗҫлеме аслă пионер вожатăйӗ тупса сирӗплетнӗ.

З. М.

ТУРКМЕНИРЕ ҪЕНЕ ТЫРА ВЫРАҪҪЕ. Укерчӗк ҫинче: «14 лет Октября» колхозăн (Ашхабад районӗ) бригади урпа вырать. Сылтăмра—нормăна 200 процент тултаракан стахановка Овез Кулиева Дурли.

С. ДЕМИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Яковлев, Семенова, Александрова юлташсем ҫулталăкри плана тултарнă

ВĂРНАР, июнӗн 17-мӗшӗ. (**Телефонпа**). МТС трактористчӗ И. Яковлев юлташ ҫуракине тухнăранпа СТЗ тракторпа 49 гектар сухалас вырăнне 200 гектар ытла сухаланă. Ҫапла вара вăл ҫулталăкри плана 130 процент тултарнă.

6-мӗш номерлӗ трактор бригадинчи Ксения Семенова тата 8-мӗш номерлӗ трактор бригадинчи Анна Александрова юлташсем те тракторпа ҫулталăк хушшинче тумалли ӗҫсен планне ытлашшипех тултарнă.

Х. ЛИСИН.
(Хамăр корр.).

Кунта ҫӗртме тума хăҫан тытăнаҫҫӗ-ши?

Муркаш районӗнчи нумай колхозсем ҫӗртме тумалли вырăна тислӗк кăларас ӗҫпе лайăх ӗҫлеҫҫӗ. Ҫуракине вӗҫленӗ хыҫҫăн Кашмашри «Свобода» колхоз 10.000 лав, «Красное Знамя» тата Свердлов ячӗпе тăракан колхозсем 4-шар пин лав тислӗк уя кăларнă. Оринино ялсоветне кӗрекен колхозсем те тислӗк кăларассипе лайăх ӗҫлеҫҫӗ. Июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне районӗпе 84.000 лав кăларнă.

Анчах та уя кăларнă тислӗк унта типсе выртать, хăйӗн пахалăхне ҫухатать. Тислӗк кăларнă хыҫҫăнах сухаласа пăрахассине нихăш колхозра та кирлӗ пек организацилемен.

Ҫӗртме тăвассипе нумай колхозсем чăтма ҫук сӳрӗк ӗҫлеҫҫӗ. Пӗтӗм районӗпе 8000 гектар ҫӗртме тумалла, пурӗ те 1.800 гектар кăна тунă. Паянхи кун тӗлне 72 колхозран пурӗ те 43 колхозра ҫеҫ ҫӗртме тума пуҫăннă. Уйрăмăнах «Автан», «Ударник», Ворошилов ячӗпе тăракан колхозсем ҫак вăхăта ҫитсе те ҫӗртме тума тытăнман.

Силос хываҫҫӗ

СӖНТӖРВĂРРИ, июнӗн 16-мӗшӗ. (**Телефонпа**). «Верный путь» колхозри комсомолецсемпе ҫамрăксем, Вăрмар районӗнчи ҫамрăксен пуҫарăвне йышăнса илсе, силос хывма тытăнчӗҫ. Вӗсем, выльăх апачӗн базине ҫирӗплетес, хӗл валли ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлесе хăварас ӗҫре силос пысăк вырăн йышăнни ҫинчен ăнлантарса парса, ҫак ӗҫе колхозниксене массăллăн явăҫтараҫҫӗ. Ҫак кунсенче колхозри силос хывмалли шăтăка тасатса юсарӗҫ. Халь унта ял хушшинчи пуҫă выртакан ҫӗрсем ҫинче, ҫырма-ҫатрасенче ӳсекен курăксене пуҫтарса 20 тонна силос хыврӗҫ. Кунсăр пуҫне 5 гектар ҫинче клевер ҫулса типӗтрӗҫ. Ку ӗҫре фермăсен заведующийӗ А. Чернов юлташ тата комсомолецсемпе ҫамрăксем тăрăшса ӗҫлерӗҫ.

Силос хывас ӗҫ малалла пырать.

Ф. ИЛЬИН.

Трактористсем промтоварсем илеҫҫӗ

Ҫӗрпӳ МТС-ӗнчи трактористсемпе трактористкăсем ҫураки вăхăтӗнче лайăх ӗҫлерӗҫ. Июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне Т. С. Степанов юлташ ертсе пыракан 10-мӗш номерлӗ трактор бригади кăҫалхи ҫул тумалли ӗҫсен планне 102,1 процент тултарнă, ҫав вăхăтрах 1.900 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Ҫӗрпӳ МТС-ӗнчи трактористсемпе трактористкăсен паха ӗҫне хака хурса, плана ăнăҫлă тултарнă трактористсемпе трактористкăсене сутма Чăвашсоюз Ҫӗрпӳ райсоюзне 11.778 тенкӗлӗх тӗрлӗ тавар янă. Ҫак кунсенче чи лайăх ӗҫленӗ трактористсемпе трактористкăсем тӗрлӗ тавар сем туянчӗ.

10-мӗш номерлӗ трактор бригадин бригадирӗ Т. С. Степанов юлташ ҫамран сыхса тунă свитер, ачине валли ботинка, 3 метр сатин, арăмне валли сарлака шарф, ачине валли костюм тата ытти япаласем те пурӗ 570 тенкӗлӗх туяннă.

Ҫак бригадăри тракторист И. Н. Антонюк та 3 метр сатин, хӗрарăмсем сыхакан сарлака шарф, джемпер тата ытти япаласем пурӗ 327 тенкӗлӗх туяннă. Трактористка М. Гаврилова юлташ 3 метр сатин, пӗр тутăр тата ытти таварсем пурӗ 380 тенкӗлӗх илнӗ. Тракторист Ершов юлташ та джемпер, 3 метр сатин, носкисем тата ытти япаласем туяннă. Тракторист И. Г. Гаврилов 327 тенкӗлӗх тӗрлӗ промышленность таварӗсем туяннă.

Совет Союзӗн Геройӗ Иван Кабалин

Каҫ пулас умӗн нимӗҫсем наступлени пуҫласа яма шутланă. Пирӗн боецсем, ҫавăн ҫинчен пӗлсе, сӗмсӗр тăшман валли кучченеҫсем хатӗрленӗ. Кашни боецăн чӗри тăшмана ҫӗмӗрсе тăкас туйăмпа тапса тăнă. Гварди сержанчӗ Иван Андреевич Кабалин та хăйӗн миномет расчетне тăшмана ҫӗмӗрсе тăкма майлаштарнă...

Ир. Тӗттӗмлӗ ҫанталăк. Ҫавăнпа усă курса, нимӗҫсем В. хули ҫине тапăнса пыма тытăннă. Пирӗн паттăр воинсем вара тăшман пуҫӗ ҫине вăйлă вут-хӗм тăкма пуҫланă. Ӳсӗр нимӗҫсен наступленийӗ чарăнса ларнă.

Ҫакă вăл 1942 ҫулхи сентябрӗн 10-мӗшӗнче пулса иртнӗ. Ун чухне пирӗн земляк Иван Андреевич Кабалин малтанхи хут ҫапăҫура пулнă. Малтанхи ҫапăҫурах вăл хăйӗн пултарулăхне кăтартса панă.

Каярахпа, 1943 ҫулта, Кабалин юлташ Харьков хулишӗн паттăррăн кӗрешнӗ. Харьков хулине тăшмантан тасатнă хыҫҫăн, Хӗрлӗ Ҫар малалла, Хӗвеланăҫнелле, тапăнса пынă.

— Сентябрь уйăхӗнче, — каласа парать герой Иван Кабалин, — Днепр урлă каҫма хатӗрлеме тытăнтăмăр. Днепр шывӗ, мăнаҫлăн хумханса юхса, нимӗҫсене хӗвеланăҫнелле хăвалама чӗнет. Нирӗн Днепр урлă ҫав самантрах каҫса, тăшмана пӗтерсе тăкас килетчӗ. Ун чухне эпӗ час-часах тăван республикăна, аннене тата йăмăксемпе шăллăмсене аса илеттӗм. Куҫ умне эпӗ вӗренсе ӳснӗ Канашри вăтам шкул, туссем, вагонсем юсакан заводри стахановецсем туха-туха тăратчӗҫ. Эпӗ алла пăшал тытса вӗсен ӗҫне сыхлатăп, тăван ҫӗршывшăн, юратнă аннешӗн ҫапăҫатăп. Ҫак шухăшсем мана ҫапăҫура паттăр пулма хаваслантаратчӗҫ.

Пирӗн артиллери вăйлăн персе тăнă хыҫҫăн, тăшман Днепр ҫыранӗнчен каялла чакнă. Вара каҫ пулас умӗн лайăх хатӗрленӗ сулăсем ҫине ларса, пирӗн боецсем Днепр урлă каҫма тытăннă. Вӗсем хушшинче Кабалин юлташăн миномет расчечӗ те пулнă. Анлă шыв урлă каҫма йывăр пулнă. Тăшман кабалинсем ҫине вăйлăн персе тăнă. Анчах пирӗн паттăр боецсене нимӗн те чарма пултарайман.

Кабалин юлташ, шыв урлă каҫсанах минометна мелле вырăна майлаштарса лартнă та вăйлăн персе тăрса, юлташӗсене каҫма пулăшнă. Ҫак ҫапăҫура Кабалин юлташ тăшманăн 4 огневой точкине тата нумай нимӗҫе пӗтерсе тăкнă. Фронт командованийӗ, унăн ӗҫне пысăка хурса хакласа, ăна Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградăланă.

Сентябрӗн 24-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Днепрăн сылтăм ҫыранӗнчи плацдарма аслăлатма приказ илнӗ. Главнокомандующин приказне пурнăҫа кӗртессишӗн Кабалин юлташ арăслан пек кӗрешнӗ. Плацдарма аслăлатассишӗн пынă ҫапăҫусен иккӗмӗш кунӗнче вăл тăшманăн 4 огневой точкине, 2 эрудн расчетне пӗтерсе тăкнă. Кунсăр пуҫне пирӗн оборона ҫине тапăнса пыракан 250 гитлеровеца лӗш тӗнчене ăсатнă.

— Ҫапăҫусем кунран кунах вăйланса пычӗҫ. Пӗррехинче ҫӗрле нимӗҫсем пирӗн ҫине наступлени тума пуҫларӗҫ, пире шыв хӗррине хӗссе пычӗҫ. Каялла чакма юрамасть, мӗнле пулсан та нимӗҫе ҫӗнтермелле. Ҫак шухăшпа ҫапăҫрăмăр эпир ун чухне. Ҫапăҫу хӗрсе пынă вăхăтра пирӗн пата батальон командирӗ Девохин юлташ чупса ҫитрӗ. Вăл минометчиксене атакăна кайма приказ пачӗ. Эпир атакăна кӗрсе кайрăмăр. Тăшмана вăйпăн та таткăлăн пырса ҫапрăмăр. Тăшман тӳсеймерӗ, каялла чакма тытăнчӗ,— хумханусăн каласа парать Иван Андреевич Кабалин.

Пирӗн паттăр земляк Кабалин юлташ нимӗҫ захватчикӗсене пӗтерсе тăкассишӗн пынă нумай ҫапăҫусенче пулнă. Вăл Украинăра Корсунь-Шевченковский патӗнче ҫапăрса илнӗ нимӗҫ захватчикӗсене пӗтернӗ ҫӗрте, Одесса хулине ирӗке кăларнă ҫӗрте ҫапăҫнă. Тăшмана Воронежран пуҫласа Кишинев патне ҫити хăваланă.

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Днепр шывӗ урлă каҫнă чухне хăюллăхпа паттăрлăх тата геройлăх кăтартнăшăн гварди сержантне Иван Андреевич Кабалин юлташа Ленин орденӗ тата «Ылттăн ҫăлтăр» медалӗ парса, Совет Союзӗн Геройӗ ятне панă.

Кабалин юлташăн кăкăрӗ ҫинче «Ылттăн Ҫăлтăр», Ленин орденӗпе Хӗрлӗ Ялав орденӗсем, «Отличный минометчик» значекӗ ялкăшса тăраҫҫӗ.

Кабалин юлташ ҫамрăк-ха, вăл 20 ҫула кăна пуснă. Ҫапла Комсомольски районри Александровка ялӗнче ӳссе ҫитӗннӗ ҫамрăк, вăрҫăччен Канашри вагонсем юсакан заводра токарь пулса ӗҫленӗскер, хăйӗн паттăр ӗҫӗсемпе чăваш халăхӗн чысне ҫӳле ҫӗклерӗ.

Чыс та мухтав хамăрăн паттăр земляка!

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Танксемпе самолетсем тума

КУСЛАВККА, июнӗн 17-мӗшӗ. (**Телефонпа**). «Путь к социализму» ялхуҫалăх артелӗн членӗсем хăйсем перекетленӗ укҫи-тенкине Хӗрлӗ Ҫар валли боевой самолетсем тума параҫҫӗ. Колхоз председателӗ Андрианов юлташ 3.000 тенкӗ панă. Унăн примӗрӗпе нумай колхозниксем 1000-шер тата 1500-шер тенкӗ панă. Ҫапла, колхозра кӗске вăхăтрах 55.000 тенкӗ пухнă.

Хӗрлӗ Ҫар валли боевой самолетсем тума ытти колхозсем те чылай укҫа пухаҫҫӗ. «13 лет Октября» колхоз 13.000 тенкӗ, Киров ячӗпе тăракан колхоз 15.000 тенкӗ панă. Ҫăкăр пӗҫерекен заводри рабочисем икӗ кун хушшинче 4.998 тенкӗ пухнă. А. Вахитова юлташ икӗ уйăхри ӗҫукҫи чухлӗ, А. Герасимова юлташ уйăх ҫурри ӗҫ укҫи чухлӗ панă.

(Хамăр корр).

Ҫамрăксем хастарлă ӗҫлеҫҫӗ

СӖНТӖРВĂРРИ, июнӗн 16-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Кушнаркасси ялсоветӗнчи «Сӗнтӗрпуҫ» колхоз ҫуракине ăнăҫлăн вӗҫленӗ хыҫҫăн сум ҫумлас ӗҫе тытăнчӗ. Паянхи куна 120 гектар ҫумланă. Ҫавăнпа пӗрлех колхозниксем ҫӗртме пусси ҫине 4.200 лав тислӗк тăкнă. 15 гектар ҫӗртме сухи тунă. Ку ӗҫре пуринчен ытла колхоз ҫамрăкӗсем хастарлăн ӗҫлеҫҫӗ. Ю. Краснова, П. Петров, Л. Дубова, В. Александров ҫамрăксем тислӗк тăкнă тата сум ҫумланă ҫӗрте нормăна 150—200 процент тултарса пыраҫҫӗ.

Ф. И.

Калчасене ҫумкурăксенчен тасатар

Ҫумкурăксем ялхуҫалăхне пысăк сиен кӳреҫҫӗ, тырпул тухăҫлăхне вăтамран 15—20 процент таран, хăшпӗр ҫулсенче ытларах та чакараҫҫӗ.

Ҫумкурăксем тăпрари нӳрлӗхе тата тырпула кирлӗ ҫӗткенсене туртса илеҫҫӗ. Ӳсен-тăрансем вара, кирлӗ ҫӗткенсемпе нӳрӗ ҫителӗксӗр пулнă пирки, вăйсăрланса ӳсеҫҫӗ. Хăшпӗр ҫумкурăксем тăпраран тырпула кирлӗ апатсене культурăллă тырăсем илнинчен темиҫе хут та ытларах илеҫҫӗ. Писен пӗр гектартан 336 килограмм таран кирлӗ апатсем илет.

Тăпрари нӳрлӗх тырпула вăйлăн ӳсме кирлӗ. Тăпрара нӳрлӗх ҫителӗклӗ пулсан, тырă та вăйлă пулать. Анчах ҫумкурăкла уйсенче культурăллă ӳсен-тăран валли нӳрӗ ҫителӗксӗр юлать. Сӳсен (урăхла —хир сӗлли) хăйне ӳсме, тулăпа танлаштарсан, тăпраран 1,5 хут ытларах нӳрлӗх илет.

Ҫумкурăксем хăвăрт ӳссе кайнипе тырă калчисене аяла туса хăварса, калчана ӳсме чăрмантараҫҫӗ. Йытпырши, сăмакран, тырă туни тавра явăнса, часах ăна пусса ӳкерет.

Ҫумкурăксем тырпула сиенлекен хурт-кăпшанкăсене хăвăрт ӗрчеме пулăшаҫҫӗ. Ҫумкурăксем хурт-кăпшанкăсене хӳтӗлеҫҫӗ, нумайӗшӗ вӗсемшӗн апат пулса тăраҫҫӗ. Хурт-кăпшанкăсем малтанхи вăхăтра ҫумкурăксем ҫинче ӗрчеҫҫӗ, кайран вара, ҫумкурăксен ҫулҫисем хытнă хыҫҫăн, вӗсем тырă калчисем ҫине куҫса сиенлеме тытăнаҫҫӗ.

Жусемсӗр пуҫне, ҫумкурăк анасем ҫинче машинăсемпе ӗҫлеме чăрмантарать, хăшпӗр чухне ҫумкурăкне пулă машина пайӗсем те ҫӗмӗрӗлеҫҫӗ.

Ҫумкурăксем тырăсен тухăҫне чакарни пе пӗрлех, вӗсен пахалăхне те нумай начарлатаҫҫӗ. Чылай ҫумкурăксен вăррисем культурăллă ӳсен-тăран вăррисемпе хутшăнаҫҫӗ, вӗсене вара сортировкăсемпе тасатса уйăрма питӗ хӗн.

Ҫумкурăк выльăх-чӗрлӗхе те сиен кӳме пултарать. Нумай ҫумкурăксем выльăхсемшӗн сиенлӗ.

Хăшпӗр ҫумкурăксем, тырăран маларах пулса ҫитсе, вăррисене ҫӗре тăкаҫҫӗ. Тăкăннă вăрăсенчен малашне каллех ҫумкурăксем шăтса тухса, тырăсене ӳсме чăрмантараҫҫӗ. Ҫавăнпа та шăтса тухнă ҫумкурăксене анчах мар, ҫӗр ҫинче выртакан ҫумкурăк вăррисене те пӗтерессишӗн кӗрешмелле.

Колхоз уйӗсенче ҫумкурăксене тӗппипех пӗтерме халӗ пур майсем те ҫителӗклӗ. Ҫулран-ҫулах агротехника ыйтăвӗсене пурнăҫласа пырса, кӗрхи тата ирхи ҫӗртме тунă ҫӗр лаптăкӗсем ӳссе пыраҫҫӗ. Тракторсемпе ҫӗре таран сухалани ҫумкурăксене тӗппипех пӗтерме май парать.

Анчах, апла пулин те, ҫумкурăксем уйсенче нумай ӳсеҫҫӗ-ха. Ҫумкурăксене пӗтермелли чи вăйлă меслет — ăна ҫумлани. Хирти ҫумкурăксене вăхăтра ҫумлани тырпул тухăҫлăхне хăпартать, ҫумкурăксене ҫӗнӗрен саралассине чарма пулăшать.

Сум ҫумлас ӗҫе халех тытăнмалла. Мӗншӗн тесен ҫумкурăксем тымар таран яма ӗлкӗреймен-ха, вӗсене ҫумлама та ҫăмăлтарах. Сурхи тырăсене вӗсем пуҫ кăларма тытăниччен ҫумласа, тасатса тăмалла. Вир, тулă акнă вырăнсене ҫу каҫиччен икӗ хутран кая мар ҫумламалла. Сӗлӗ тата урпа аннисене те ҫумламасăр хăварма юрамасть. Хăшпӗрисем кантăр, куратул тата викăпа сӗлӗ хутăш акнă тырăсене ҫумлама кирлӗ мар, тесҫӗ. Ку тӗрӗс мар. Ун пек культурăсем ҫинче те ҫумкурăксем нумай ӳсеҫҫӗ. Клевер анисене те ҫумласа тухмалла, уйрăмăнах вăрлăхлăх акса хăварнă участоксене лайăх тасатас пулать.

Йӗтӗн анисем ҫинчи ҫумкурăксене йӗтӗн шăтса тухсан, 4—5 сантиметр ҫӳллӗш ӳссен, ҫумламалла.

Пропашной культурăсене (ҫӗрулми, сӗвелҫаврăнăш) шăтса тухсанах 1—2 хут сӳрелемелле. Ун хыҫҫăн вара йăран хушшисене ҫу каҫиччен 2—3 хутчен, ҫумкурăксем тухнă майӗпе, ҫӗре кăпкалатса тăмалла, ҫумкурăксене тасатсах пымалла.

Ҫумкурăксене ҫумланă чухне тăррипчен ҫеҫ татса илмелле мар, вӗсене тымарӗпех кăкласа илмелле. Тымарӗпе кăкламан ҫумкурăксене — пиҫене, молокана, йытпыршине, чăрăш тăраллă курăка тымар касмалли юри хатӗрленӗ япалапа касса илмелле.

Ҫумланă ҫумкурăксене уйсене пăрахса хăварма юрамасть, вӗсене купана пухса, компост тунă ҫӗрте усă курмалла е ҫул ҫине илсе тухса купана хурса, типнӗ хыҫҫăн ҫунтарса ямалла.

Компост купи хунă ҫӗрте вăрри пулса ҫитеймен ҫумкурăксемпе усă курмалла. Компост купи тунă ҫӗрте тымартан саралакан хăях (пырей), свинорей ҫумкурăксен тымарӗсене хума юрамасть.

Ҫумланă чухне час-часах сарă чеченлӗ ҫумкурăксене ҫеҫ ҫумласа тухаҫҫӗ, уйрăм палăрса тăман ҫумкурăксене ҫумламасăрах хăвараҫҫӗ. Ун пек туни тӗрӗс мар. Ҫумламасăр хăварнă ҫумкурăк хăвăрт ӳссе кайса, тырăсене часах хупласа илет. Ыраш хушшинче ӳсекен шăнкăрав курăкне час-часах ҫумламасăр хăвараҫҫӗ. Вăл курăк хăйӗн тымарӗпе ыраш тымарӗ ăшӗнчи кирлӗ ҫӗткенне туртса илет. Ку ҫумкурăк ӳснӗ вырăнта тырă тухăҫлăхӗ те чылай чакать.

Пӗрре ҫумланипе ҫумкурăксем пӗтмесен, тепӗр хут ҫумласа тухмалла. Тырăсем ҫинчи ҫумкурăксене вӗсем кӗпҫелӗ ларичченех ҫумласа пӗтермелле.

Ҫавăн пекех тата сулсем ҫинчи, канавсенчи, йăрансем ҫинчи, вăрман хӗррисенчи ҫумкурăксене те, вӗсем чечеке ларичченех, вăхăтран-вăхăта ҫумласах тăмалла. Тырпул участокӗнчен аякра ӳсекен ҫумкурăксене те ҫумламасăр хăварма юрамасть, вӗсем те уйсене тепӗр хут вăрăсем тăкса, ҫумкурăксем сарма пултараҫҫӗ.

Пирӗн республикăн хăшпӗр районӗсенче повилика ятлă ҫумкурăк ӳсет, вăл йӗтӗн акса тăвакан районсенче ытларах пулать.

Повилика — питӗ те сиенлӗ ҫумкурăк. Унăн тымарӗ те, симӗс ҫулҫисем те ҫук. Вăл ытти ӳсен-тăрансенчен ҫӗткен илсе пурăнать. Пирӗн республикăра йӗтӗн ҫинче тӗлпулакан повилика саралнă. Шăтса тухнă повилика тӳрех йӗтӗн туни тавра ҫаврăнса ӳсме тытăнать те йӗтӗн туни варринчен тӗрлӗрен апат-ҫимӗҫсене, ҫӗткенсене туртса илет. Хăшпӗр чухне повиликăн пӗр курăкӗ 200 тӗп йӗтӗне пӗтерме пултарать. Вара ҫав вырăнта 2—3 метр сарлакăш пушă вырăн тăрса юлать.

Повилика саралнă вырăнсене ҫулса илмелле. Повиликăна вăл чечеке ларма пуҫличчен ҫумласа пӗтерме тăрăшмалла. Унăн вăрри, пулса ҫитсе, тăкăнма пултарать.

Агротехника ыйтăвӗсене кирлӗ пек пурнăҫласа пырсан, ҫумкурăксене хăвăрт пӗтерме пултаратпăр. Ҫумкурăксене пӗтерес тӗлӗшпе ҫине тăрса ӗҫлес пулать.

Колхоз хирӗсенчен ҫумкурăксене тасатсах тăрса, пысăк тухăҫлă тырпул туса илер, хамăрăн тăван Хӗрлӗ Ҫара тата ҫӗршыва ытларах тырпул туса парар!

Агроном Н. КОНДАКОВ.

Выльăхсене юратса пăхаççĕ

«Волентёр» колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çулсерен лайăххăн пынине пĕтĕм район пĕлет. — Волентёрсем пек ĕçлĕр! — теççĕ ытти колхозсенче.

«Волентёр» колхозра ĕнесен планĕ тăрăх 64 пуç пулмалла, халĕ 73 пуç пур, сурăхсен хисепĕ 115 пуç вырăнне 137 пуçа çитнĕ. Юлашки 3 уйăх хушшинче кăна ĕне выльăхсен йышĕ 7 пуç, сурăхсен йышĕ 40 пуç, сыснасен йышĕ 20 пуç ÿснĕ. Колхоз государствăна аш-какай памалли обязательствине те колхоз тахçанах тултарнă, çитес вăхăтра тата сĕт-çу парас тетпĕ.

Фермăсенче ĕçлекенсем хăйсен ĕçне юратса туса пыраççĕ. Савăнтан килет те ĕнте пĕтĕм ĕçĕн пахалăхĕ. Вĕсем выльăхсене вăхăтра çитерсе ĕçтерессе çук мар, вĕсене таса та çутă сурасенче усраççĕ. Сысна пăхакан-и вăл, сурăх пăхакан-и — пурте выльăх-чĕрлĕхе пăхмалли правилăсене пĕлеççĕ, чирлесен вĕсене пулăшу пама пултараççĕ. Çавăнпа вĕсен выльăхсем мăнтăр, чирлесе пулман.

Выльăхсене лайăх пăхнă май вĕсен тухăçлăхĕ те ÿссе пырать. Иртнĕ çулта акă, плана пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те тенĕ пекех ирттерсе тултарнă. Дояркă О. Константинова кашни ĕнерен, вăтам шутпа илсен, 1.472 литр сĕт суса илнĕ. Вăл хăйне çирĕплетнĕ 1.870 литр сĕт суса пама пулнă. Чылай çул хушши сурăхсем пăхакан Е. Сидорова 51 сурăхран 65 путек илнĕ, вĕсене лайăх пăхса ÿстернĕ. Унпа вăл ĕçшĕн хушса тÿленĕ. Сысна пăхнă çĕрте тĕрлĕ Е. Кĕкеметьева лайăх ĕçлет. Вăл çурасене пăхма ятарлах ... 16 çăвăр илнĕ.

Фермăра ĕçлекенсем, Хĕрлĕ Çар тусакан пыракан чаплă çĕнтерÿсемпе хавхаланса, хăйсен ĕçне тата лайăхрах тăваççĕ. Çулла пуçланнах, вăл хĕл валли апат хатĕрлеме, силос хывма пуçларĕ. ... весем 10 ...

Х. ЛИСИН.

ВАРНАР. (Хамăр корр.).

Выльăхсем валли витаминлă апат хатĕрлеççĕ

МУРКАШ, июнĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Иртнĕ хĕлле тĕрлĕ колхозсем, выльăх апачĕ çитменнипе пула, чылай выльăх çухатрĕç. Халĕ вĕсем хĕл валли апат хатĕрлес ĕçе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. «Авангард» колхоз (председателĕ Константинов) общественнăй выльăхсем валли 180 центнер витаминлă утă хатĕрленĕ. Çавăн пекех «Ударник», «Восток», «Пионер» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те ку енĕпе пысăк ĕçлеççĕ. Вĕсем ... силос та хывса ...

Анчах та районри хăшпĕр колхозсем выльăхсем валли апат хатĕрлеме начар тытăннă. Уйрăмах ку тĕлĕшпе «Красный Октябрь» тата «Малалла» колхозсенче ĕçсем ... пыраççĕ.

Зоотехник М. ПОТАПОВА.

Чăх-чĕпсен тухăçлăхĕшĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Вăрманкасинчи «Культура» колхозри чăх-чĕп фермине ĕçлекен Евдокия Осипова хăй ĕçне юратса тăвать. Фермăра 60 чăх шутланать. Вĕсене Осипова юлташ зоотехник вĕрентнĕ пек пăхса усрать. Чăх витине тата кулкăртне чăхсем валли ялан хăйăр, кăмрăк, шурă тăм тата кирпĕч ванчăкĕсем ларнине курма пулать. Çавăн пек апат пăхнипе чăхсем лайăх çăмарта тума пуçларĕç.

Колхоз государствăна майăн 15-мĕшне тĕлне 1088 çăмарта панă, çапла вăл çулталăк планне 40 процент тултарнă. — Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсене ... кашни чăхран 90—100 çăмарта илме сăмах паратăп, — тет Евдокия Осипова.

И. АНДРЕЕВ.

Пленум решенийĕ ĕçре пулăшать

ИШЛЕЙ. «Эстафета» колхозра иртнĕ çуличчен комсомол организацийĕ пулман. Фронтран аманса таврăннă çамрăксем пуçарăвĕпе комсомол организаци тунă. А. Кушников юлташа секретаре суйланă.

ВЛКСМ райкомĕ çĕнĕ организацие ĕçре пулăшса пынă. Уйрăмах ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕн решенийне пурнăçласа пынă май, комсомол организацийĕ тĕрекленсе пынă, хăйĕн авторитетне ÿстернĕ. Ялти çамрăксемпе çыхăнса ĕçлессине анлăлатнă.

Комсомол организацин секретарĕ А. Кушников юлташ мĕнпур ĕçне — вăйлă тырпулăн пуçланнă кĕрешĕве — уйхирте, çуракинче ĕçлекенсем хушшинче организацилесе пынă. Ялти çамрăксем çуракин чи ответлă участокĕнче — сÿреленĕ, сухаланă, акнă, çĕрте хăйсен ĕçченлĕхĕпе пултарулăхне кăтартса пынă.

Комсомолец Г. Бондарев уйхир ĕçĕн бригадирĕ. Вăл ертсе пыракан бригада пур ĕçсенче те ялан малта пырать. Çуракин планне вăл ытти бригадăсенчен малтан вĕçленĕ. Колхоз счетоводĕ Н. Мадеев, кладовщица Е. Малыгина комсомолецсем те çуракин ĕçне активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем колхозниксем хушшинче политикăлла-массăллă ĕç вăйпăтнă. Уйхирте ĕçлекенсене çĕнĕ хаçатсем вуласа пама, стена хаçачĕ кăларас ĕçе йĕркеленĕ. Комсомол организацийĕ «Çĕнтерÿ» ятлă стена хаçачĕ кăларать.

Акара лашасемпе тĕрĕс усă курас енĕпе те комсомолецсем лайăх ĕçсем тунă. Лашасене епле пăхнине сăнаса тăрса, колхозниксене нормăна ытлашшипех тултарса пыма пулăшнă. Выльăх-чĕрлĕх апатне тирпейсĕр тыткалакансене тата выльăхсене чăрсăррăн пăхнине хирĕç кĕрешнĕ.

Комсомол организацийĕ ĕçре пуçарса пынипе «Эстафета» колхоз кăçал çуракине лайăх пахалăхпа, кĕске срокра ирттернĕ. Халĕ комсомолецсем тислĕк тăкас, ирхи сĕртме тăвас тата çум çумлас ĕçсене пуçарса пыраççĕ.

З. МИТРОФАНОВА, (Хамăр корр.).

Совет çарĕсем Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсемпе радио Хĕрлĕ Çар Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен çаплах нумай çыраççĕ. Чи пысăк хаçатсем тата радиокомментаторсем финн халăхне пĕтес патне илсе çитернĕ Финлянди правительствине питĕ хытă вăрçаççĕ. «Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: «Финн халăхĕн пурнăçĕ çав тери начар пулнăшăн пуринчен ытла Финлянди правительстви айăплă».

Радиокомментатор Халтенберг сăмахĕпе, финсемшĕн Совет Союзĕн çарĕсене часрах хирĕç тăма пăрахнинчен ырри урăх нимĕн те çук.

Обозреватель Уинтер, Хĕрлĕ Çар Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен калаçа, çав наступление союзниксемпе таччăн çыхăнса тунине палăртса парать.

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Арбетарен» хаçат Совет çарĕсем Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен çырнă статьяра çапла калать: «Вырăссем наступлени туни нумай финсен куçĕсене уçĕ. Финляндин киревсĕр политикишĕн ответлă пулса тăракан господасене истори айăпа кăларĕ» тет.

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли Мэйл» хаçат Совет çарĕсем Карели перешеекĕнче наступлени туни çинчен çапла çырать: «Халĕ Карели перешеекĕнче вырăссем хурçăпа бетонран тунă оборона тăрăхне татнă, çав тăрăх пĕтĕм тĕнчери чи хăватлă оборона тăрăхĕсенчен пĕри пулса тăрать, тетчĕç. Вырăссем халь Выборг патнелле вăркăнчĕç. Темиçе уйăх каялла вырăссем сĕннĕ условисене йышăнманшăн финсен ÿкĕнмелле пулĕ».

ГЕТЕБОРГ, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Гетеборгс Хандельстиднинг» хаçат çапла çырать: «Хальхи вăхăтра Карели перешеекĕнче пыракан ĕçсем кĕтмен çĕртен сиксе тухнăскерсем мар: вырăссен условийĕсене Финлянди сирсе янă хыççăн мĕнле кĕрешмелле пулнă, Россия халь çапла кĕрешет. Анчах Хельсинкире мĕн çине шанса тăнă-ши вара!» «Англипе Америка хаçачĕсем Финляндин Америкăпа Англи пулăшассине шанмалла мар тесе калани пĕр хăлхаран кĕрсе тепринчен тухнă курăнать».

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен «Або унтерреттель сер» хаçачĕ çакна йышăнать: Карели перешеекĕнче Хĕрлĕ Çар наступлени тума пуçланă хыççăн халь Финляндире пур çĕрте те правительство çинчен çапла кулса калаççĕ: «Мĕн акатăн — çавна вырса илетĕн», теççĕ. Хаçат çавăн пек калакан çынсене хытă вăрçать, финн халăхне Финлянди командовани пĕлтернисене çеç итлеме ÿкĕтлет.

ФИНСЕН США-ри ПОСЛАННИКНЕ США-ран ТУХСА КАЙМА ХУШНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Англири радиопередатчикĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: финсен США-ри пасланникне тата финсен миссийĕн ытти виçĕ членне паспорчĕсене таварса панă, вĕсене Пĕрлешÿллĕ Штатсен çĕршывĕнчен тухса кайма хушнă.

Государство департаменчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çав финсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен США интересĕсене хирĕç ĕçленĕшĕн кăларса ямалла тунă. Анчах та, тенĕ государство департаменчĕ, — çак ĕç Финляндипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахнине пĕлтермест.

США ИСПАНИЕ НИМĔÇСЕНЕ ТАВАР ПАМА ЧАРĂНМА ЫЙТАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, государство департаменчĕ США-н Испанири посолне Хейса Испани правительствинчен чи кирлĕ материалсене, вăл шутра вольфрама, слива çăвне, тир-сăрана, çăма Германие яма чарăнмашкăн ыйтма хушнă. Çак çĕнĕ ыйту вăрçă ларутăрăвĕ улшăннинчен тата Португали нимĕçсене вольфрам яма пăрахнинчен тухса тăрать.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Карантан хулинчен хĕвеланăçнерехре тата Вир шывĕпе Эль шывĕ хушшинче союзниксен çарĕсем çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Комон-Тилли секторĕнче союзниксен çарĕсем тăшманăн бронетанковăй вăйĕсен темиçе хаяр атакине сирсе янă, тăшмана чылай пысăк çухатусем кÿнĕ.

Котантен çурутравĕ çинче Киневиль хули районĕнче союзниксем çĕнĕ территорисем йышăннă. Çавăн пирки Котантен çурутравĕ çине тинĕс хĕрринчен пырса кĕресси самаях çăмăлланнă.

Ĕнер союзниксен çар карапĕсем флангсенче тăшманăн куçса çÿрекен батарейисене персе тăнă.

Союзниксен суту-илÿ суднисен караванĕсем Çурçĕр Франците аван килсе тăраççĕ. Союзниксен кунти армийĕсем тăтăшах çынсем тĕлĕшпе çĕнĕ резервсем тата снаряжени илсе тăраççĕ.

Союзниксен самолечĕсен пысăк соединенийĕсем тăшман çул-йĕрĕсене, аэродромĕсене тата ытти объекчĕсене те пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Фронтăн пĕр участокĕнче те паллă улшăнусемех пулман, анчах та союзниксен çарĕсем Сен-Мер-Эглиз хулинчен 9 кило-

метр кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Пон л'Аббе пунктран хĕвелтухăçнелле малалла куçнă. Тăшман пуçарăва хăй аллине илме хăтланнă, анчах та ку ĕç ăнăçман. Тăшман контратакисене ăнăçлă сирсе янă. Пирĕн ударлă вăйсем вĕçĕмсĕр ÿссе пынă.

Июнĕн 15-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ 3.000 вĕçев тунă. Çак вĕçевсене пуринчен ытла Францири аэродромсенче тăракан самолетсем тунă, вĕсем тăшман объекчĕсене арми штабĕсем кăтартса панă тăрăх атакăланă. Кăнтăрла иртсен, вăтам бомбардировщиксем тăшманăн горючи тата снаряжени склачĕсене, кĕперĕсене тата ытти çулйĕр объекчĕсене атакăланă. Атака Котантен çурутравĕ çинчи Валонь хулинчен пуçласа Лавальпе Домфрон хулине çитиччен пынă. Ку вăл тăшман фронтĕнчен 75 миля шаларах пулать. Пĕр вăтам бомбардировщик хăйĕн базине таврăнман.

Истребитель-бомбардировщиксем тата истребительсем, вăл шутра ракетăсем пăрахма майлаштарнисем те, кун-каçиччене хĕсапăçнă. Çав объектсем Ле Манри, Фужерти, Майенри, Виртри, Гранвильти, Фолиньти тата Шартрти чугун çул деповĕсене çавăн пекех тата Оран шывĕ çинчи кĕпере тапăннă. Кан хулинчен хĕвелтухăçнерехре истребитель-бомбардировщиксем тăшманăн вăрмансемпе садсенче пытанса тăнă çарĕсемпе танкĕсене атакăланă. Самолетсен ытти соединенийĕсем Сена шывĕ урлă паромсемпе каçарса тăракан вырăнсем çине, наблюдательнăй постсем çине, радиостанцисем çине, артиллери пухăнса тăнă вырăнсем çине тата Сен-Ло çывăхĕнчи темиçе кĕперпе чугун çулсем çине бомбăсем пăрахнă. Çак операцисенче тăшманăн 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен авиацийĕн 7 самолет пĕтнĕ.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Котантен çурутравĕ çинче союзниксен çарĕсем çаплах Пон-л'Або патнелле, хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ. Тилли-Сюр-Сель секторĕнче пирĕн çарсем тĕллĕн тĕллĕн çитĕнÿсем тунă, анчах та хула çаплах тăшман аллинче тăрать-ха. Тăшман енчен те, пирĕн енчен те патрульсем активлăн кĕрешнĕ.

Çанталăк начар тăнипе ирхине пирĕн авиаци вăйлăнах кĕрешме пултараймарĕ. Союзниксен çар карапĕсем кун каçах тăшман батарейисемпе çарĕсем пухăнса тăнă вырăнсене пенĕ».

Францири партизансен ĕçĕсем

АЛЖИР, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пысăк заголовоксемпе Французсен хирĕç тăракан çар организацийĕн Францири ĕçĕсем çинчен французсем хăйсем панă малтанхи официальнăй пĕлтерĕве хаçатсем пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă.

Çавăн пекех тата Францирен илнĕ пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре Францири çапăçусем çинчен каланă. Ку пĕлтерĕве Францин шалти хĕçпăшаллă вăйĕсен ĕçĕсене ертсе пыракан комитет панă. Унта çапла çырнă: Франци патриочĕсем чылай пунктсенче тăшман çулйĕрĕсене татнă, çапла вĕсем нимĕçсене хăйсен çарĕсене вырăнтан вырăна куçарма чăрмантарнă. Франци патриочĕсен çак ĕçĕсем союзниксен çарĕсене Нормандие анса ларма пулăшнă. Чылай районсенче, сăмахран, Альпăра, Вогезра, Юрта, Пиренейра тата Бретаньре патриотсен ушкăнĕсем тăшман чăсĕсене тапăннă, унăн обозĕсене атакăланă, пысăкрах мар горнизонсене пĕтересе пĕтере тăкнă, хĕçпăшалпа боеприпассен темиçе складне тытса илнĕ. Тăшман çухатăвĕсем пур çĕрте те французсенчен ытларах пулнă.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июнĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕсене тапăннă. «Москито» йышши самолетсен соединенийĕ Германие тапăннă.

Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем июнĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Буланьре тăшманăн торпеда катерĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем пĕтĕм фрончĕпех малалла куçнă. Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи секторта тăшман каялла чакать, унăн чăсĕсемпе кăшт кăна çапăçма тивет. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чăсĕсем Нарни хулипе Терни хулине (çурутравăн вăтам пайĕнче) йышăннă, ун хыççăн хăвăрт куçса пырса, 40 километр ытла малалла кайнă, вара июнĕн 15-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен, Тоди хулине кĕнĕ (Тоди хули — Терни хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре). Кунтан хĕвеланăçнерехре акăлчансен 8-мĕш армийĕн ытти чăсĕсем Орвието хулинчен 15 километр çурçĕрелле куçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕн чăсĕсем те çавăн пекех малалла куçнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăннă, вĕсенчен чи паллăраххи Аквапентенте. Хĕвеланăç енчи çырансен секторĕнче 5-мĕш армин малти чăсĕсем Гроссето хули патне çывăхарса пыраççĕ.

Союзниксен самолечĕсем ĕнер Италин хĕвеланăç çыранĕсенчи тата Флоренци районĕнчи темиçе чугун çул кĕперĕ çине; çавăн пекех тата тăшманăн Италири ытти объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ФРАНЦУЗ ÇАРĔСЕМ ЭЛЬБА УТРАВĔ ÇИНЕ АННИ

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 17-мĕшĕнче французсен çар чăсĕ Эльба утравĕ çине ăнăçлă пырса аннă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин халăха ирĕке кăларасшăн кĕрешекен армийĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăç Боснире Югослави чăсĕсем хаяр çапăçу хыççăн Лопари ятлă çирĕплетнĕ пункта туртса илнĕ. Эсэсовецсен 13-мĕш дивизийĕнчи 350 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Инçене перекен 8 йывăр тупă тата ытти çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Хĕвеланăç Боснире халăха ирĕке кăларасшăн кĕрешекен армин чăсĕсем пыра-пыра çапнипе тăшман каялла чакать. Гламочпа Дрвар хушшинчи районра нимĕçсене пур опорнăй пунктсенчен те хăваласа кăларнă. Тичево ятлă пункт темиçе хутчен те аларан алла куçнă, халĕ ăна Югослави чăсĕсем йышăннă. Тăшман çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсен 600 виллине яхăн пăрахса хăварнă.

Хорватипе Санджакра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман пысăк çухатусем тÿсет.

Америка авиацийĕ Японие тапăнни çинчен тĕплĕнрех пĕлтерни

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен Китайри базинчен пĕринче пурăнакан корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсене Китая кăçалхи апрель уйăхĕнче никам пĕлмен çулпа янă, унта вĕсем ятарласа хатĕрлесе хунă аэродромсем çине аннă, халĕ вара Японие тапăннă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министерстви çапла пĕлтернĕ: Японие тапăннă çар бомбардировщикĕсем Индири, Китайри тата Бирмăри базăсенчен вĕçсе хăпарнă.

ТОКИО, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 16-мĕшĕнче ирхине ирех икĕ сехетре американецсен «Б-29» тата «Б-24» йышши 20 самолечĕ яхăн Кюсю утравĕн çурçĕр пайне тапăннă.

Токио радиовĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 16-мĕшĕнчи тапăнура американецсем Явата хулинчи заводсем çине, çавăн пекех тата Модзи, Фукуока тата Омута хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министерстви çапла пĕлтернĕ: ĕнер пирĕн хăватлăран та хăватлă «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксем Японин Кюсю утравĕ çинчи Явата хулине тапăннă, тенĕ. Министерство пĕлтернĕ тăрăх, çав тапăну вăхăтĕнче японецсем Америка бомбардировщикĕсене пĕр сиен те тăвайман. Анчах та американецсен икĕ самолечĕ, авари пулнă пирки, çĕмĕрĕлсе кайнă.

МАРШАЛЛ ГЕНЕРАЛ АМЕРИКАНЕЦСЕН ХĂВАТЛĂРАН ТА ХĂВАТЛĂ ÇĔНĔ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМПЕ УСĂ КУРАССИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америка çарĕн штаб начальникĕ Маршалл генерал Америка авиацийĕ Японие тапăннă май çапла каланă: инçетри базăсенчен вĕçсе тухса Японие «Б-29» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксем тапăнни тăшмана тапăнма çĕнĕ йышши хĕçпăшал тупăннине пĕлтерет: штабсен начальникĕсен совечĕ çак хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксемпе пĕр фронтра кăна усă курмалла мар тесе шутлать, вĕсемпе тĕнчери пур фронтсенче те усă курмалла. Вĕсемпе усă курас ĕçе штабсен начальникĕсен совечĕ тĕрĕслесе тămалла, ăна Арнольд генерал ертсе пымалла, вăл вара çак самолетсемпе усă курас тĕлĕшпе çав советăн уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет.

Вырăссен флотоводецĕ Ф. Ф. Ушаков

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, вырăссен çав тери чаплă флотоводецĕсен Ушаковпа Нахимовăн çар орденĕсемпе медалĕсене тунă. Вĕсем чи лайăх совет морякĕсен кăкăрĕсене илемлетсе тăрĕç.

Ушаковпа Нахимов адмиралсем вырăссен тинĕс-çар флочĕн историйĕнче хăйне уйрăм вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ячĕсемпе пирĕн тăван çĕршывăн чапĕшĕн тунă чаплă та паттăр ĕçсем çыхăнса тăраççĕ.

Федор Федорович Ушаков 1743 çулта пуян мар çемьере çуралнă. 16 çул тултарсан, вăл кадетсен тинĕс-çар корпусне кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, малтан Балтика тинĕсĕнче, унтан вара Хура тинĕс флотĕнче ĕçленĕ. Унăн мĕнпур ĕçĕсем çав тинĕссем çинче пулса иртнĕ. Кадетсен корпусĕнче вĕренсе илнĕ пĕлĕвне Ушаков Кронштадтран Шурă тинĕсе тата унтан каялла ишсе кайнă чухне çирĕплетнĕ. Çамрăк моряк Петербургран Вăтаçĕр тинĕсе икĕ хутчен кайса килнĕ. Çавăнпа та Ушаков 1783-мĕш çулта, хăйне Хура тинĕс флотне янă чухне, опытлă офицер пулнă. Вăл хăйне пăхăнакансене çирĕппĕн тытнипе тата вĕсемшĕн тимлĕн тăрăшнипе палăрса тăнă. Çĕпĕ вырăнта та вăл хăйĕн çыннисене ывăнма пĕлмесĕр вĕрентнĕ, унăн карапĕсен экипажĕсем ялан чи лайăх экипажсем пулнă. Çапăçусенче Хура тинĕс флочĕ тунă пирвайхи ăнăçусем Ушакова пула тунăскерсем пулнă.

Федор Федорович Ушаков Фидониси патĕнче пулса иртнĕ çапăçура (1788 çул) малта пыракан карапсене ертсе пынă, вăл флот ĕçне лайăх пĕлнипе тата тăшмана хăвăрттăн пырса çапса çĕмĕрсе тăкма пĕлнипе кăтартса панă. Çав çапăçура вырăссен 4 линейнăй карап та 8 фрегат çеç пулнă, çапах та вĕсем тăшманăн 17 линейнăй карапĕпе 8 фрегатне хăваласа янă.

Çав çапăçура Ушаков çĕнĕ тактикăна, вырăссен флотне тăшмана çĕмĕрсе тăкма май панă тактикăна пăхăнса çапăçнă. Тинĕс çинчи çапăçура ытти чухне эскадрăсем яланах юнашар пынă. Çавăн пек чухне вара кашни карап тăшманăн хăйпе тĕлме-тĕл пыракан карапĕ çине пенĕ. Çакăн пек тактикăн çитменлĕхĕ çакă пулнă: вăл командирсен пуçарулăхне хĕснĕ тата час-часах çапăçăва татăклăн вĕçлеме чăрмантарнă.

Ушаков çапăçусене активлăн ирттермелли майсемпе усă курнă. Карапсене умлăнхыçлăн вырнаçтарса тухса вăхăта сая ямасăр, вăл тăшманăн вăйсăр вырăнне шыраса тупнă та атакăна кĕрсе кайнă. Çапла туса вăл тăшманăн стройне пăснă. Кун пек чухне çапăçу ăнăçлăхĕ пĕтĕмпех хăвăрттăн та татăклăн тата пĕлсе çапăçниччен килнĕ. Çакăн пек тунипе ĕнтĕ Ушаков вăйлărах тăшмана та çĕнтерме пултарнă.

Çĕнĕ тактика карапсен командирĕсенчен умне пысăк та ответлă требованисем лартнă. Ушаков хăйĕн наставленийĕсенче çапла çырнă: «Командующисене хăйсене пăхăнакан çынсене парусене çирĕплетнĕ тата çĕкленĕ çĕрте капатсем тăрăх хăвăрттăн чупма вĕрентме сĕнетĕп... Парусене пĕчĕклетес тата сарас ĕçе хăвăрт тумалла, парусене çĕклес тата антарас ĕçсене... çынсем ăна тума тĕплĕн вĕренсе çитиччĕнех темиçе хут та туса ирттермелле».

Паруспа çÿрекен карапсен йывăр техникине Ушаков кăтартса панă пек алла илмесĕр, тинĕсри çапăçусен тактикин ăнăçлă пулма пултарайман. Çавăнпа та Ушаков моряксене тĕплĕн вĕрентме тăрăшнă.

Ушаков уставсемпе инструкцисене ăнланса илмесĕр ячĕшĕн кăна пурнăçа кĕртекенсене хирĕç татăклăн кĕрешнĕ. Вăл офицерсене хăвăрттăн тата татăклă çапăçнă чухне инструкцисемпе правилăсене час-часах çирĕппĕн пурнăçа кĕртме май пулманни çинчен, тăшманăн планне тавçăрса илнĕ хыççăн, ăна хăвăрттăн пырса çапма инструкцисемпе правилăсене пăсмалла пулсан, вĕсене пăсмалли çинчен ăнлантарса панă. Çакăнта 1-мĕш Петр кăтартса панисем — уставсене пурнăçа кĕртнĕ чухне «пĕлсе ĕçлемелле» тени — палăрса тăрать.

1790-мĕш çулта Ушакова Хура тинĕс флочĕн командующийĕ пулма лартнă. Ушаковăн пултарулăхĕ тинĕс çинчи операцисене ирттернĕ çĕрте часах палăрнă. Çуркунне Севастопольти эскадра тăшман çыранĕ патне пынă та виçĕ эрне хушши çыран хĕрринчи укреплениесемпе портсене артиллерирен персе тăнă. Синоп портне атакăласа, Ушаков тăшманăн 26 суднине путарнă. Ун хыççăн вăл Анапăри крепоçа çĕмĕрсе тăкнă та Севастопольне таврăннă. Çухату питĕ сахал тÿснĕ, хăйпе пĕрле тăшманăн 8 суднине илсе пынă.

Тăшман вырăссене хирĕç хăйĕн тинĕс çинчи тĕп вăйĕсене янă. Ушаков вĕсене Керчь проливĕ патĕнче кĕтсе илнĕ. Тăшманăн 54 судно пулнă, вырăссен 33 судно çеç. Ун пек пулни вырăссен флотоводецне шиклентермен. Вăл вырăс карапĕсен экипажĕсен паттăрлăхĕ çине тата карапсен артиллерийĕ вăйлă та тĕл пени çине шанса тăнă. Флот командующийĕ тăшман атакисене сирсе пăрахнă хыççăн хăйĕн вăйĕсемпе наступление кайнă. Вăл тăшман патне таччăнах пырса тăнă та ăна картечьпе пеме пуçланă. Тăшман стройĕ саланса кайнă. Турксен флагманĕ вара, хăйĕн умĕнче вырăс адмиралĕн карапне курсан, каялла чакма сигнал панă.

Тепĕр 10 кунтан Ушаков Тендровски сăмсах патĕнче тăшманăн темиçе линейнăй карапне тата ытти суднисене путарнă, хĕçпăшаллă пĕр карапне тыткăна илнĕ. Хăйне пăхăнакан командирсене вăл пĕр тунă ăнăçăва тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерiччененех вăйлатса пыма хушнă. Ахальтен мар ĕнтĕ флагман карапĕ çинче çапăçусем пынă вăхăтра тăшмана хăваламаллине тата атакăна вăйлатмаллине пĕлтерекен сигнал пĕр минутлăха та анман.

Тепĕр çулхине адмирал тăшмана çĕнĕрен хăватлăн пырса çапнă. Тăшманăн татăклă операцисем ирттерме хатĕрленнĕ флочĕ батарейăсен хÿтлĕхĕнче Румелий çыранĕнче Калиакрия сăмсахĕ çывăхĕнче тănă. Вырăссем пырса кĕни уншăн кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ĕç пулса тăнă. Ушаков карапĕсем пынă маях çыранри батарейăсемпе тăшман суднисем хушшине кĕрсе кайнă та вĕсене атакăлама тытăннă. Тăшман карапĕсем, пĕр йĕркисĕр пере-пере, умлăн-хыçлăн тăрса тухма пикеннĕ. Анчах вырăссем вăл строя часах аркатса янă. Турксен флагманĕ çапăçуран хăй малтан тухса тарнă. Çав çапăçура тăшманăн нумай суднисене сиен кÿнĕ тата путарнă. Хăтăлса юлнă карапсем сапаланса кайнă. Алжир эскадри çеç каçхине Босфор патне çитме пултарнă.

Çакăн хыççăн темиçе çул иртсен, адмирал Ушаков Суворовпа пĕрле Италире чаплă çĕнтерÿ тунă. XVIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче французсем Наполеон ертсе пынипе Вăтаçĕр тинĕсре çирĕпленсе ларнă та Египета туртса илнĕ. Çак вăхăтра Ушаков турксен эскадрипе пĕрле французсем оккупациленĕ Ионически утравсене ирĕке кăларма кайма приказ илнĕ. Вăл вара карапсен пĕр ушкăнне акăлчансен адмиралне Нельсона пулăшма уйăрса янă. Вăл 1798-мĕш çулхи октябрь уйăхĕнче тăшманăн стратеги тĕлĕшĕнчен паха базисене — Цериго, Кефалония, Санта-Мавро Занте утравĕсене, çавăн пекех тата никам çĕнтерейми шутланса тăнă Корфу крепоçне тытса илнĕ.

Ушаков Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче тунă çĕнтерÿсем Суворов çарĕсемпе Ушаков флотне Италире пĕрлешсе çапăçма май панă. Адмирал моряксен отрячĕсене Отранто тата Анконе патне янă. Вăл Бриндизи патĕнче антарнă десант, пĕтĕм кăнтăр Итали урлă каçса, Неаполь хулине штурмласа туртса илнĕ. Çак çапăçусем вырăссен морякĕсем Рим хулине пырса кĕнипе вĕçленнĕ. Çакă вăл 1799-мĕш çулта пулнă.

Александр императорăн правительстви Ушаковăн чаплă ĕçĕсене хакламан. Хура тинĕс флотĕнче ун вырăнне часах француз эмигрантне Маркиз де Траверсене лартнă. Ун хыççăн вара адмирал сахал вăхăт хушши Балтика тинĕсĕнчи галернăй (алăпа ишсе çÿремелли) флот пуçĕнче тăнă. Ушакова çакăн пек ĕç пани тинĕс ведомстви паллă флотоводецăн пултарулăхĕпе урăх усă курасшăн пулманнине кăтартса панă.

1807-мĕш çулта Ушаков отставкăна тухнă. Ун хыççăн 10 çул пурăнсан хăйĕн тăван çĕршывĕнче — Тамбов кĕпĕрнинче — вилнĕ.

1-мĕш Павел Суворовăн чапне сÿнтерме пултарайман пекех, патша правительстви вырăссен чаплă флотоводецне манни те унăн чапне пĕтерсе лартайман.

Пархатарлă тăван çĕршыв хăйĕн аслă ывăлĕ çинчен манмарĕ. Пирĕн боевой флотăн историйĕнче Ушаков туса ирттернĕ çапăçусем яланах пирĕннисем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Ушаков Хура тинĕс çинче вырăссен ялавĕ пуç пулса тăнине çирĕплетнĕ тата вырăс флочĕн Европăри авторитетне çĕкленĕ. Ушаков тĕттĕмлĕхĕн тата çаврăнăçусăрлăхăн тăшманĕ пулнă, вырăссен хăюллă та татăклă тинĕс-çар стратегийĕпе тактикине тунă, çав стратегипе тактика хăй вăхăтĕнче Хĕвеланăçĕнчи тинĕс-çар флочĕн искусствинчен малта тăнă. Ушаковăн флот ертсе пырас искусствин уйрăмлăхĕ — тăшмана татăклăнах çĕнтерме тăрăшасси пулнă.

Вăл вырăс флочĕн паха йăлине—пурне те çĕмĕрекен наступлени тăвассине, оборонăна никам çĕмĕрейми тăвассине, тăван çĕршывăн чапĕшĕн кĕрешнĕ чухне командующипе офицерсем тата рядовойсем пĕрлĕхлĕ пулассине — ÿстерсе çирĕплетнĕ. Çак вăл вырăс хĕçпăшалне калама çук хăватлă туса хунă, çакна пула тăшмана питĕ чаплă çĕнтерсе пынă.

Халĕ пирĕн Тинĕс-Çар флочĕ Балтика Баренц тата Хура тинĕссем çинче вăйлă та ултавлă тăшманпа паттăррăн кĕрешет. Нимĕç захватчикĕсем халĕ совет флочĕ вăйлă пырса çапма пултарнине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Пирĕн аслă Сталин хавхалантарса пыракан моряксем хăйсен пĕтĕм вăйне хамăрăн тăван çĕршыва паттăррăн та хăюллăн сыхланă çĕре параççĕ. Тинĕс-Çар флотĕнчи темиçе вунă карапа тата нумай чăссене Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă тата гвардеецсен ятне панă. Совет морякĕсене 40.000 çынна ытла орденсемпе медальсем парса наградăланă, офицерсемпе краснофлотецсене 150 çынна ытла Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Пирĕн авалхи аслă тăвансен — вырăс флотоводецĕсен Ушаковпа Нахимовăн ĕçĕсем краснофлотецсемпе офицерсене тăшмана çĕнтерес ĕçре чаплă та паттăр ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Профессор Н. КОРОБКОВ.

СОВЕТ УЧЕНАЙĔСЕН ФАШИЗМА ХИРĔÇЛЕ ВИÇÇĔМĔШ МИТИНГĔ

Июнĕн 18-мĕшĕнче, вырсарникун, Мускав вăхăчĕпе 17 сехет те 30 минутра, Мускавра ученăйсен фашизма хирĕçле виççĕмĕш митингĕ пулать.

Митинга радио тăрăх параççĕ.

СОВЕТ УЧЕНАЙĔСЕН ФАШИЗМА ХИРĔÇЛЕ КОМИТЕЧĔ

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян июнĕн 18-мĕшĕнче юлашки кун „СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА" ятлă американецсен çĕнĕ, сасăлă илемлĕ фильмне кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00198 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 ф. 6, 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.